***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2024/2025 учебный год. 7 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Ытла та хӳхӗм Чӑваш ҫӗр-шывӗ! Вӑл ҫав тери хитре улӑхсемпе, вӑрмансемпе пуян. Вӑрмансенче тӗрлӗ йывӑҫ ӳсет: юман, ҫӑка, ӑвӑс, хыр, йӗлме, шӗшкӗ, вӗрене, йӑмра, хурама, чӑрӑш. Ҫут тӗнчере тӑван ҫӗртен хакли тата мӗн пур-ши?* Пӗр йышши членсем союзсӑр ҫыхӑннӑ пирки вӗсене запятой лартса уйӑрнӑ.

**Кашни чарӑну паллишӗн – 0,5-шер балл, ӑнлантарнӑшӑн – 0,5 балл. Пӗр йышши членсем пуртан тесе кӑна ӑнлантарсан балл лартмалла мар. Йӑнӑш лартнӑ кашни чарӑну паллишӗн 0,5-шер балл чакать. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

2. Пӗр ӑнлавах пӗлтерекен, анчах тӗрлӗрен илтӗнекен сӑмахсене синонимсем теҫҫӗ. Текстра *хӳхӗм*, *хитре* синонимсем тӗл пулаҫҫӗ. Вырӑсла – *красивый, прекрасный*.

**Синоним мӗнне ӑнлантарнӑшӑн – 2 балл, синоним пулакан кашни сӑмаха тупнӑшӑн – 1-ер балл, куҫарнӑшӑн – 1 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

3. *Юман* – дуб, *ҫӑка* – липа, *ӑвӑс* – осина, *хыр* – сосна, *йӗлме* – ильм, *шӗшкӗ* – орешник, *вӗрене* – клен, *йӑмра* – ветла, *хурама* – вяз, *чӑрӑш* – ель.

**Кашни сӑмаха тупнӑшӑн – 0,25-шер балл, куҫарнӑшӑн – 0,25-шер балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

4. Глагол тесе япала ӗҫне-хӗлне пӗлтерекен пуплев пайне калаҫҫӗ. *Ӳсет*. *Ӳс* – тымар морфема, *-ет* – сӑмаха улӑштаракан аффикс, хальхи вӑхӑт аффиксӗ. *Ӳс* – сӑмах тӗпӗ.

**Глагол определенийӗшӗн – 1 балл, тупнӑшӑн – 1 балл, кашни сӑмах пайне ӑнлантарнӑшӑн – 1-ер балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

5. *Пуян, юман*. Вӗсенче *4 сас палли, 5 сасӑ*.

**Тупнӑ кашни сӑмахшӑн – 1-ер балл, сас палли шутне палӑртнӑшӑн – 1 балл, сасӑ шутне палӑртнӑшӑн – 2 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл**.

6. *Нумай пӗтӗ, сахал ҫитӗ, пӗрле пурӑннине мӗн ҫитӗ?*
*Ҫӗрте малта пыр, пинте кая ан юл.*
*Этем пурте пӗр: вырӑс та, тутар та, чӑваш та, мӑкшӑ та.*
*Халӑх хушшинче упа та ташлама вӗренет.*
*Ырӑ ҫынна ырӑ ятпа асӑнаҫҫӗ, усал ҫынна – усал ятпа.*

**Кашни хуравшӑн – 1-ер балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

7. Ҫӳҫ.

**Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.**

8. Эпиграмма – пӗр-пӗр ҫынна мухтаса е унран тӑрӑхласа кулакан кӗске сӑвӑ.

**Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.**

9. „Чӗрӗ парне“. Александр Галкин. Тӑвӑл.

**Хайлав ятне пӗлнӗшӗн – 2 балл, автор ячӗпе хушамачӗшӗн, йытӑ ячӗшӗн – 1-ер балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысӑк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2024/2025 учебный год. 8 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Пирĕн республикăра вăрмансем те нумай. Унта тĕрлĕ йышши тискер кайăк чылай пурăнать. Атăлпа Сăр тăрăхĕнчи вăрмансенче эсĕ мулкачпа тилле, пăшипе пăлана, упапа кашкăра, пакшапа арлана, хир сыснипе çӳлевĕçе асăрхама пултаратăн.* Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки вĕсене запятой лартса уйăрнă.

**Кашни чарăну паллишĕн – 1-ер балл, ăнлантарнăшăн – 1 балл. Пĕр йышши членсем пуртан тесе кăна ăнлантарсан балл лартмалла мар. Йăнăш лартнă кашни чарăну паллишĕн 0,5-шер балл чакать. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене синонимсем теççĕ. Текстра *нумай, чылай* синонимсем тĕл пулаççĕ. Вырăсла – *много*.

**Синоним мĕнне ăнлантарнăшăн – 2 балл, синоним пулакан кашни сăмаха тупнăшăн – 1-ер балл, куçарнăшăн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Мулкач* – заяц, *тилĕ* – лиса, *пăши* – лось, *пăлан* – олень, *упа* – медведь, *кашкăр* – волк, *пакша* – белка, *арлан* – хомяк, *хир сысни* – кабан, *çӳлевĕç* – рысь.

**Кашни сăмаха тупнăшăн – 0,25-шер балл, куçарнăшăн – 0,25-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. *Пултаратăн. Пул* – тымар морфема, -*тар* – сăмах тăвакан аффикс, -*ат* – сăмаха улăштаракан аффикс, хальхи вăхăт аффиксĕ, -*ăн* – сăмаха улăштаракан аффикс. *Пултар* – сăмах тĕпĕ.

**Глагола тупнăшăн тата глагол тĕпне тĕрĕс палăртнăшăн – 0,5-шер балл, ытти хуравсемшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

5. *Тилле.* Япала ячĕ *ă, ĕ* сасăпа пĕтсен пару падежĕнче çав сасăсем тухса ӳкеççĕ. Вĕсем умĕн пĕр хупă сасă çеç пулсан вăл вăрăмланать: *тилĕ – тилле.*

**Пару падежĕнче тĕрĕс çырнăшăн – 1 балл, *ĕ* сасă тухса ӳкни çинчен çырнăшăн – 2 балл, хупă сасă вăрăмланни çинчен çырнăшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

6. *Ыр ут хыççăн пин ут шыв ĕçет.*

*Ятлă çынна ял савать.*

*Ыр лашана пĕр пушă, ырă çынна пĕр сăмах.*

*Ялан ăспа çӳресен ялти ватă ятламасть.*

*Юлташсăр çын тымарсăр йывăç пек.*

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Çăвар.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. Элеги – салхуллă, пусăрăнчăк шухăш-туйăмлă, кĕвĕ-çемĕллĕ хайлав.

9. «Камсем эпир…». Виталий Петрович Никитин. Станьял.

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысăк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы** к заданиям муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2024/2025 учебный год. 9 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Чăваш çĕр-шывне анлă улăхсем, симĕс вăрмансем, юхан шывсем, таса çăл куçсем хитрелетеççĕ. Пирĕн тавралăх кайăксемпе те пуян. Вăрмансемпе, уйсемпе çӳренĕ чух эсĕ хурчка, тăрна, пăрчăкан, шăнкăрч, ула такка тата ытти кайăксене асăрхама, илтме пултаратăн. Вĕсем пурте пирĕн таврана илемлетсе тăраççĕ.* Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки вĕсене запятой лартса уйăрнă.

**Кашни чарăну паллишĕн – 0,5-шер балл, ăнлантарнăшăн – 0,5 балл. Пĕр йышши членсем пуртан тесе кăна ăнлантарсан балл лартмалла мар. Йăнăш лартнă кашни чарăну паллишĕн 0,5-шер балл чакать. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене синонимсем теççĕ. Текстра *хитрелет, илемлет* синонимсем тĕл пулаççĕ. Вырăсла – *делать красивым, украшать, разукрашивать*.

**Синоним мĕнне ăнлантарнăшăн – 2 балл, синоним пулакан кашни сăмаха тупнăшăн – 1-ер балл, куçарнăшăн – 1 балл. Тĕп формăна лартмасан – 1 балл чакармалла. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Хурчка* – ястреб, *тăрна* – журавль, *пăрчăкан* – трясогузка, *шăнкăрч* – скворец, *ула такка* – дятел.

**Кашни сăмаха тупнăшăн – 0,5-шер балл, куçарнăшăн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. *Пултаратăн. Пул* – тымар морфема, -*тар* – сăмах тăвакан аффикс, -*ат* – сăмаха улăштаракан аффикс, хальхи вăхăт аффиксĕ, -*ăн* – сăмаха улăштаракан аффикс. *Пултар* – сăмах тĕпĕ.

**Глагола тупнăшăн тата глагол тĕпне тĕрĕс палăртнăшăн – 0,5-шер балл, ытти хуравсемшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

5. *Юхан, пуян*. Вĕсенче *4 сас палли, 5 сасă.*

**Тупнă кашни сăмахшăн – 1-ер балл, сас палли шутне палăртнăшăн – 1 балл, сасă шутне палăртнăшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

**Кашни тĕрĕс хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

6. *Саккăрăн авăн çапма лайăх, иккĕн икерчĕ çиме лайăх.*

*Пĕр çын утать – йĕр юлать, çĕр çын утать – çул пулать.*

*Пĕри вăрмана, тепри армана.*

*Пур пĕрле, çук çурмалла.*

*Вăрлаканăн пĕр çылăх, çухатаканăн çĕр çылăх.*

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Çамка.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. Ода – лирика поэзийӗпе музыка жанрӗ, пӗр-пӗр чаплӑ пулӑма е паллӑ ҫынна мухтаса ҫырнӑ хӗрӳ туйӑмлӑ, ҫӗкленӳллӗ кӗвӗллӗ хайлав.

**Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.**

9. „Хӑтлӑ пӗлӳ“. Паласахун Юсупӗ. Куҫараканӗ – А. Смолин.

**Хайлав ятне пӗлнӗшӗн – 2 балл, авторне палӑртнӑшӑн – 2 балл, куҫаруҫишӗн – 1 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысӑк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2024/2025 учебный год. 10 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Чăваш çĕр-шывĕ урлă анлă та пысăк Атăл, сарлака Сăрпа çаврăнса юхакан Çавал, Кĕтне, Энĕш тата ытти юхан шывсем юхаççĕ. Вĕсен ытарма çук çыранĕсенче чăваш ялĕсемпе хулисем вырнаçнă. Ялĕсем вара хитре, пуян, вăрман пекех йывăçлă, пахчаллă. Ачасем çу каçипех юхан шывсенче шыва кĕреççĕ, ишме вĕренеççĕ, пулă тытаççĕ.* Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки вĕсене запятой лартса уйăрнă.

**Кашни чарăну паллишĕн – 0,5-шер балл, ăнлантарнăшăн – 2 балл. Пĕр йышши членсем пуртан тесе кăна ăнлантарсан балл лартмалла мар. Йăнăш лартнă кашни чарăну паллишĕн 0,5-шер балл чакать. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене синонимсем теççĕ. Текстра *анлă, сарлака* синонимсем тĕл пулаççĕ. Вырăсла – *широкий*.

**Синоним мĕнне ăнлантарнăшăн – 2 балл, синоним пулакан кашни сăмаха тупнăшăн – 1-ер балл, куçарнăшăн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Атăл* – Волга, *Сăр* – Сура, *Çавал* – Цивиль, *Кĕтне* – Кубня, *Энĕш* – Аниш.

**Кашни сăмаха тупнăшăн – 0,5-шер балл, куçарнăшăн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. *Вырнаçнă*. *Выр(ă)н* – тымар морфема, *-аç* – сăмах тăвакан аффикс, *-нă* – сăмаха улăштаракан аффикс, иртнĕ причасти аффиксĕ. *Вырнаç* – сăмах тĕпĕ.

**Глагола тупнăшăн – 1 балл, кашни пайне ăнлантарнăшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

5. *Юхакан (6 сас палли, 7 сасă), юхан (4 сас палли, 5 сасă), ялĕсемпе (8 сас палли, 9 сасă), ялĕсем (6 сас палли, 7 сасă), пуян (4 сас палли, 5 сасă).*

**Тупнă сăмахшăн – 0,2-шер балл, сас палли шутне палăртнăшăн – 0,4-шар балл, сасă шутне палăртнăшăн – 0,4-шар балл (кашни сăмахшăн 1-ер балл пулса тухать). Пĕтĕмпе – 5 балл**.

6. *Вăрă пуçĕ çинче çĕлĕк çунать.*
*Тăшман йăпăлтатса хур тăвать, тусу тавлашса ыр тăвать.*
*Пĕлмесен – пĕр сăмах, пĕлсен – çĕр сăмах.*
*Тухман çын тухсан тăман тухать.*
*Çын валли шăтăк ан чав, хăвах кĕрсе ӳкĕн.*

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Чĕрне.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. Халал – уйрӑлса каякан ҫын юлакансене вӑрах асра тытма, пурнӑҫлама хушса, вӗрентсе каланӑ сӑмах е парса хӑварнӑ пурлӑх. «Чӑваш халӑхне». Иван Яковлевич Яковлев.

**Кашни тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

9. „Хӑтлӑ пӗлӳ“. Паласахун Юсупӗ. Куҫараканӗ – А. Смолин

**Хайлав ятне пӗлнӗшӗн – 2 балл, авторӗшӗн – 2 балл, куҫаруҫишӗн – 1 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысӑк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2024/2025 учебный год. 11 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Чăваш Республикин тĕп хули – Шупашкар. Вăл республикăри чи ватă хула. Ытти ватă хуласен шутне Улатăр, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри кĕреççĕ. Республикăра тата çакăн пек хуласем пур: Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне, Куславкка тата Канаш.*

*Çӳллĕ тĕкме е чул хӳме тытса çавăрнă çынсем пурăнакан вырăна ĕлĕк хула тенĕ. Ун чухне хулара ялан тенĕ пекех ытларах вырăссем пурăннă. Вĕсем тĕрлĕ япала ăсталанă, суту-илӳ тунă. Шупашкар, Çĕрпӳ, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри хулисем вырнаçнă вырăнта авал чăваш ялĕсем пулнă.* Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки вĕсене запятой лартса уйăрнă.

**Кашни чарăну паллишĕн – 0,5-шер балл, ăнлантарнăшăн – 0,5 балл. Пĕр йышши членсем пуртан тесе кăна ăнлантарсан балл лартмалла мар. Йăнăш лартнă кашни чарăну паллишĕн 0,5-шер балл чакать. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. Пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене синонимсем теççĕ. Текстра *ĕлĕк, авал* синонимсем тĕл пулаççĕ. Вырăсла – *прежде, давно, раньше, в старое время, встарь.*

**Синонимсем пулнине пĕлнĕшĕн – 2 балл, синоним пулакан кашни сăмаха тупнăшăн – 1-ер балл, куçарнăшăн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Чăваш Республики* – Чувашская Республика*, Шупашкар* – Чебоксары*, Улатăр* – Алатырь*, Çĕрпӳ* – Цивильск*, Сĕнтĕрвăрри* – Мариинский Посад, *Çĕнĕ Шупашкар* – Новочебоксарск, *Çĕмĕрле* – Шумерля, *Етĕрне* – Ядрин, *Куславкка* – Козловка, *Канаш* – Канаш.

**Кашни ята тупнăшăн – 0,2 балл, куçарнăшăн – 0,3-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. *Ăсталанă. Ăс* – тымар морфема, *-та* – сăмах тăвакан аффикс, *-ла* – сăмах тăвакан аффикс, *-нă* – сăмаха улăштаракан аффикс, иртнĕ причасти аффиксĕ. *Ăстала* – сăмах тĕпĕ.

**Глагола тупнăшăн тата сăмах тĕпне палăртнăшăн – 0,5-шер балл, ытти пайсене ăнлантарнăшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

5. *Етĕрне (6 сас палли, 7 сасă), ялан (4 сас палли, 5 сасă), япала (5 сас палли, 6 сасă), ялĕсем (6 сас палли, 7 сасă).*

**Тупнă сăмахсемшĕн – 0,25-шер балл, сас палли шутне палăртнăшăн – 0,5-шер балл, сасă шутне палăртнăшăн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл**.

**6.** *Паракантан ил, çапакантан тар.*
*Кĕр пуçтарать, çур салатать.*
*Касма çăмăл, ӳстерме йывăр.*
*Вăрман пек пуянни çук, уй пек асли çук.*

*Çĕвĕçĕн сăхманĕ çĕтĕк, тимĕрçĕн пуртти катăк.*

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Хăлха.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. Пехил – аслисем, ашшĕ-амăшĕ çамрăкрах тăванĕсене, ачисене тав туса, ырă сунса калани.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

9. „Йывăр шухăшсем“. Михаил Кузьмич Кузьмин, Çеçпĕл Мишши.

**Кашни хуравшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысăк хаклав – 5 балл.**